# Поэзи сăн-сăпачĕн палăкĕ

**(Ю. СЕМЕНТЕРĔН «ВУНИККĔ» ПОЭМИНЕ ВУЛАНĂ МАЙ)**

Миçе поэт Чăваш çĕр-шывĕнче? Тӳрех татса калассăм килет: мĕн чухлĕ çыравçă—çавăн чухлĕ! Миçен вĕсем? Кирек кам та, кирек хăçан та тĕп-тĕрĕссине шахвăртаймĕ, мĕншĕн тесессĕн икĕ пайăрпа палăртса хăварма тивет вĕсене: пĕрремĕшĕ—пур çыравçă та тенĕ пекех литература ĕçне сăвă çырнинчен тытăнать, иккĕмĕшĕ—сăвăçсем çуралсах пыраççĕ. Анчах та эпир хамăрăн чаплă поэтăмăрсене яланах малти ретре лартма-тăратма тивĕç. Асăнсах илер-ха, эппин, вĕсене—хăçан халăх поэчĕ ята илнине пăхса мар, хăçан çуралнине пăхса—аслинчен чи кĕçĕнни таран Николай Шелепи, Çемен Элкер, Петĕр Хусанкай, Яков Ухсай, Стихван Шавлы, Александр Алка, Васлей Давыдов-Анатри, Георгий Ефимов, Александр Галкин, Геннадий Айхи, Юрий Сементер, Порфирий Афанасьев.

Юрий Сементерĕн поэмине «Вуниккĕ» тесе ахальтен ят паман. Ку хайлав мĕнле пайăрăмсемпе тĕвĕленни пирки автор кĕнеке ум сăмахĕнче ăнланмалла каланă. Тĕп шăнăрĕ вара çакă: виççĕмĕш пинçуллăха пирĕн литературăмăрти вуникĕ канăççăр шыравçă Чăваш халăх поэчĕ ятпа кĕнĕ.

Паллах, чăвашсен «Вуник кăшăллă» юррине техĕмлĕ сăра пичкине асилтерекен поэмăна халăх умĕнче уçса-пуçласа парса, хамăрăн мухтавлă ентешĕмĕр, Петĕр Хусанкайăн «Шелепи шерепийĕ» хайлавĕ хыççăн, сăвă цехĕнчи ăстасен ĕçĕ-хĕлĕ пирки тепĕр халалкалаçу пуçарса пысăк парне кӳчĕ. Ăна поэзи сăн-сăпачĕн палăкĕ выранне шутлама юрать. Тепĕр хут асăнассăм килет: вуниккĕмĕш поэчĕ вăл—хăй. Апла пулсан вăл хăйне те хăй аллипех палăк лартса хăварчĕ мар-и? Поэмăна та Юрий Сементер ахальтен мар чăваш халăхĕн çак ята пĕрремĕш илнĕ Шелепирен пуçлать. Малалла вара «Хĕн-хур айĕнче» ятлă вилĕмсĕр поэма авторĕ Çемен Элкер Кушлавăш халалне Танăш ачине панă майлă сăва çаврăмĕсем шăрçалать. Çав вăхăтрах автор аслă юлташĕсене пуçа тайса тав тăвать, тăван поэзин çирĕммĕш ĕмĕрти каçалăкĕнче алран-ал тытса пĕрле ĕçленĕ тата ĕçлекен сăвăç-тусĕсен ячĕсене вĕсен çуралнă вăхăчĕсене шута илсе, вуникĕ уйăх çине пайласа сăнарлать. Пурин ятне те, тен, асăнайман та пулĕ. Çакă паха: поэзине юратакан е хăй те сăвăсем çырнă тата çыракан вулавçă ку поэмăра хăйĕн ятне хăех сăвăласа ăшра çырса хăварма та пултартăр тенĕ пек туйăнать.

Трак ен те пултаруллă çыравçăсемпе, уйрăмах сăвăçсемпе, паларса тăрать. Революцичченхи Тарас Кирилловран пуçласа, синкерлĕ самана серепине пула хур курнă Нестер Янкас, Çĕр-шывăмра нимĕççенчен хӳтĕленĕ вăрçăра пуçĕсене хунă Марк Аттай, Варкуш Энжей, Супенькке Илли, вăрçă хыççăн вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Михаил Нямань, Васли Тоймак, Мĕтри Васлейĕ, каярахпа çут тĕнчерен уйрăлнă Владимир Харитонов, Юрий Петров, Борис Романов... Халĕ пурăнакан Геннадий Юмарт, Петĕр Яккусен, Вениамин Пехил... Ентеш-поэтсем пирки ăшшăн аса илсе çырса кăтартнă Юрий Сементер. Пуринчен ытла Нестер Янкас поэт-лирик шăпи пирки тĕплĕнрех сутатма тăрăшнă.

Çакна каласа хăварни те выранлă: Юрий Сементер хăй кăрлачăн 2-мĕшĕнче кун çути курнă, шăпах 60 çул каялла... Апла унăн поэмăна тĕллевлĕ пуçлама та сăлтавĕ пысăк. Тепĕр тесен, пĕрремĕш халăх поэчĕ Шелепи те вăл çуралнă чух утмăлалла çывхарнăскер пулнăске. Кĕскен. каласан, çут çанталăкри вуникĕ уйăхра çуралнă сăвăçсене йĕркипе-черечĕпе ятран хисеплесе çырни мĕнле хаклă! Кунта поэт кашни ĕçтешне лавр кăшăлĕ çакса ярас кăмăллă пулни çеç мар, самана сăн-сăпатне хамăр тĕлĕшрен пахалас тĕвве салтса пани те пур, мĕншĕн тесен, автор калашле, кирек мĕнле ӳнерçĕ те хăй вăхăтне хăй куçĕпе курса, хăй чунĕ витĕр кăларса, х ă й мелĕ-меслечĕпе шухăшпа туйăм ӳкерчĕкĕ ӳкерет. «Юрий Сементер те пĕчĕкренех сăвă хайлама, купăс калама тата çепĕç юрăсем шăрантарма юратнă... Чăнах та пĕчĕк Юра хавхаланăвĕ паян халăхăмăр юратса юрлакан юрă пулса тăчĕ. Çар хĕсметĕнче те, сăмах лаççинче те вирлĕ паларчĕ унăн ĕçĕ-хĕлĕ. Çирĕм те пилĕк кĕнеке кăларчĕ вăл, тăван поэзин ешĕл анинче хăйĕн выранне тупрĕ. «Вуниккĕ» поэма—паянхи чăваш литературин сăвалла пултаравĕнче ырă ята тивĕçнĕ сăмах ӳнерçисене чĕререн хисеплесе, пуç тайса лартнă чĕрĕ палăк. Вăл ĕмĕрех ларасса эпĕ çирĕп шанатăп»,—тесе хак панă Сементер пултарулăхне кĕнеке калăпласа хатĕрленĕ редактор, хамăр ентеш—Исмай Исемпек хыç сăмахра.

Эпĕ ун çумне Юрий Сементер ку поэма вĕçнерех каланă тăвата йĕркене кĕртетĕп:

Сементере нумай-и кирлĕ?<br>
Çук, кирлĕ мар çынран ытла.<br>
Чăваш сăмахĕ тухтăр вирлĕ—<br>
Ак мĕн çинчен вăл шухăшлать.

Николай ЕРШОВ.